Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнченпе тухать

ЗОЛОТОЙ ФОНД ПРЕССЫ MMVIII ЗОЛОТОЙ ФОНД ПРЕССЫ MMIX

17 (7761) № * Шăмат кун, 2010 çулхи мартăн (пуш) 13-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ

**Ĕçре пултаруллисем**

## Хăйсен ĕçĕнче чăн-чăн маттурсем



***Сăн ӳкерчĕкре эсир федераллă налук службин Чăваш Республикинчи районсем хушшинчи 6-мĕш номерлĕ инспекцийĕн тĕп патшалăх налук инспекторне Вера Викторовна Павлована, налук тӳлекенсемпе, вĕсене регистрацилессипе тата учета илессипе ĕçлекен пайĕн тĕп специалист-экспертне Надежда Евстафьевна Ивановăна тата тухса çӳресе тĕрĕслевсем иртерес енĕпе ĕçлекен пайĕн тĕп патшалăх налук инспекторне Лилия Витальевна Павлована куратăр. Шанса панă ĕçе тивĕçлипе тата ответлăха туйса пурнăçланишĕн, клиентсемпе тараватлă пулнишĕн хисеплеççĕ вĕсене.***

**В. ШАПОШНИКОВ**
**сăн ӳкерчĕкĕ.**

**Вулакансене пĕлме**

## Асăрханăр, ултавçăсем çӳреççĕ!

Муркашра та, ытти ялсенче те аякран килнĕ çамрăк çынсем тĕрлĕ медицина таварĕсене сĕнсе çӳренĕ тĕслĕхсем пулнă. Ял çыннисене пĕрле пухса тĕрĕс мар калаçусем ирттерме те именсе тăмаççĕ вĕсем. «Эпир таварсене сирĕн районти хӳтлĕх пайĕнчипе танлаштарсан йӳнĕрех хакпа сутатпăр», – тесе уйрăмах ватă çынсене улталаççĕ. Районти хӳтлĕх пайĕ халиччен те нимĕнле тавар та сутман. Унăн ĕçĕ пачах урăх енлĕ-çке. Тата çамрăксем тĕрлĕ документ ыйтса вĕсен номерĕсемпе серийĕсене те çырса юлма пултараççĕ. Çакна вĕсем: «Тен, сирĕн пенси укçине татах та ӳстерме майсем пур. Эпир тĕрĕслĕпĕр», – тесе суйса тăваççĕ. Кайран вара документ номерĕсемпе усă курса тĕрлĕ усал ĕç туса хума та пултараççĕ.

Çакăн пек суя тавар сĕнсе çӳрекенсенчен тата ултавлă калаçусем ирттерекенсенчен пăрăнма тăрăшăр. Ыйтусем сиксе тухсан районти хӳтлĕх пайне 62-2-69 тата 62-3-38 номерсемпе шăнкăравлăр. Е тата Пенси фончĕн районти уйрăмне – 62-9-80 тата 62-8-91 номерсемпе.

**Н. ПЕТРОВА,**
**районти социаллă хӳтлĕх пайĕн пуçлăхĕ.**

**Канашлу пулать**

## Утарçăсем валли

Çĕр ĕçĕ нумай енлĕ те пуян пулни çĕнĕлĕх мар. Хурт-хăмăр ĕрчетесси ял хуçалăх отраслĕн пĕр енĕ шутланать. Турă хуртĕнчен ытлă-çитлĕ продукци илесси çăмăл ĕç маррине пыл çисе курнă кашни çынах ăнланать ĕнтĕ. Хурт-хăмăр отраслĕне тĕрĕс-тĕкел аталантарасси – пĕрлехи ĕç. Пыл хуртĕнчен илекен продукцие пурте кăмăлланине пĕрлешӳллĕ хуçалăхсемпе пĕрлех ялта пурăнакансем те хăйсен хушма хуçалăхĕсенче ытларах та ытларах вĕллесем тытма пуçлани çирĕплетет.

Çак отрасль ăна пĕлсе йĕркелесе пырсан яланах тупăшлă та усăллă. Пыл хурчĕсем паха продукци панипе пĕрлех ял хуçалăх культурисене шăркалантарма пулăшни те çĕр ĕçченĕшĕн вăрттăнлăх мар. Çавăнпа та хурт-хăмăр ĕрчетесси çине пирĕн паян туллин çаврăнса пăхмалла. Район хăйĕн аталанăвĕнче çак çула тивĕçлĕ шайра тытма тăрăшать те. Çакна шута илсе çитес кĕçнерни кун, пуш уйăхĕн 18-мĕшĕнче, районти хурт-хăмăр ĕрчетекенсемпе анлă канашлу ирттеретпĕр. Кун йĕркинче хурт-хăмăра çуркунне пăхасси, çăва кăларасси тата чир-чĕрсемпе вăхăтра епле кĕрешесси т. ыт. те пулĕç. Канашлура тĕрлĕ шайри хурт-хăмăр ăстисемпе çак ĕçри ăсчахсен усăллă канашĕсем тин кăна çак ĕçе кӳлĕнекенсен куçне уçĕ. Çавăнпа та унта хутшăнса кашниех хăйне хумхантаракан ыйтăва татса пама пултарĕ.

Канашлу «Моргаушавтотехсервисăн» актовăй залĕнче 10 сехетре пуçланать.

**Хамăр инф.**

**Лару**

## Депутатсен районти Пухăвĕ канашланă

Иртнĕ кĕçнерни кун, мартăн 11-мĕшĕнче, депутатсен районти Пухăвĕн черетлĕ 39-мĕш ларăвĕ иртнĕ. Депутатсем ларура Муркаш районĕнче ĕç условийĕсемпе ĕç сыхлавĕ 2009 çулта мĕнле шайра пулни пирки муниципаллă докладпа, депутатсен районти Пухăвĕ çумĕнчи Çамрăксен парламенчĕн ĕçĕ-хĕлĕпе паллашнă, Муркаш районĕнче преступленисем тăвассипе кĕрешессине вăйлатассипе 2007–2009 çулсем валли йышăннă комплекслă программăна мĕнле пурнăçланине, район территорийĕнче пушар хăрушсăрлăхĕ мĕнле шайра пулнине тата ытти ыйтусене тишкернĕ.

Кунпа пĕрлех депутатсем районти Пухура унчче тунă йышăнусене улшăнусем кĕртнĕ.

Депутатсен районти Пухăвĕн ĕçне Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕсем Владислав Григорьевич Данилов, Евгений Германович Борисов, Пĕтĕм Раççейри ирĕклĕ пушар обществин Чăваш Республикинчи уйрăмĕн председателĕ Светлана Леонидовна Сергеева хутшăннă.

**Хамăр инф.**

**Район администрацийĕн кунĕнчен**

## Хамăр пурнăç хамăртанах килнине ăнланаççĕ

Район администрацийĕн кунĕсем районта малалла пыраççĕ. Иртнĕ юн кун вăл Хорнуй ял тăрăхĕнче пулчĕ. Район администрацийĕн яваплă ĕçченĕсем район территорийĕнчи республика, федераллă шайри ытти ведомствăсен представителĕсемпе пĕрле чи малтан вырăнти предприятисемпе организацисенче, учреждениесенче пулчĕç, ăнăçсăр çемьесене çитсе курчĕç, çынсене хăйсен ыйтăвĕсемпе йышăнчĕç.

Район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов районти тĕп больницăн поликлиника ертӳçипе А.П. Чиновниковапа тата ял тăрăхĕн пуçлăхĕпе В.А. Любимовапа чи малтан ялти библиотекăра пулчĕ. Юрий Александрович Хорнуй тăрăхне тĕпчессипе библиотекăра мĕн тунипе интересленчĕ. Ял тăрăхĕн пуçлăхĕ каланă тăрăх, Н.И. Борисова общественлă ĕçре хастар: ачасемпе концертсем хатĕрлет, кирлĕ пулсан хăех купăс тăсса ярать. Çӳрессе те библиотекăна ытларах ачасем çӳреççĕ.

«Путене» ача сачĕн подразделенийĕнче вара район пуçлăхĕ садике миçе ача çӳренипе кăсăкланчĕ. Кунта миçе çын ĕçленине шутласан, ачасем ытларах кирли куçкĕретех.

– Хальхи вăхăтра 7 ача кунта, кĕçех вĕсен йышĕ 11-е çитмелле, – терĕ Л.И. Сидорова воспитательница.

Иртнĕ çулхи ноябрьте кунта шкул столовăйĕ пулнă çурта юсаса клуб çĕнĕрен ĕçлеме пуçланă.

– Çамрăксем çав тери кăмăллă уншăн. Çĕнĕ çул уяне çакăнта ирттертĕмĕр, – ăнлантарать Валентина Алексеевна. – Юсав ĕçĕсене ирттерме вырăнти бюджетран 8 пин тенкĕ кăна куçарнă. Ял çыннисем пулăшрĕç. Депутатсен районти Пухăвĕн депутачĕ А.А. Сидюшкин пысăк пулăшу пачĕ. Ял çыннисем тӳлевсĕрех ĕçлерĕç. Ял тăрăхĕн депутачĕсем А.Н. Ванюшкин, С.А. Харьков, А.И. Быков, клуб администрацийĕнчен И.Г. Кожевникова питĕ тăрăшуллă пулчĕç. Ял халăхĕ те айккинче тăмарĕ, тĕрлĕ пулăшу пачĕ. М.В. Колесникова, В.В. Смелов, А.И. Бубнов, В.С. Ванюшкина, И.М. Кожевников, Г.Г. Воробьева, Т.А. Кузнецова, Э.А. Никитина, Ю.П. Евдокимов, Н.А. Ошманов, çамрăксенчен Дима Бубнов, Игорь Евдокимов, Алексей Ошманов, Александр Чижов, Андрей Харьков тата ыттисем хастар пулчĕç. Ку списока татах та тăсма пулать. Çутă тата музыка енĕпе зала илемлетессине çамрăксем хăйсем çине илчĕç.

Тумаллисем татах та пур-ха кунта. Сĕтел-пукана çĕнетмелле. Ял çыннисене паян пĕрле пуçтарăнса калаçмалли вырăн пурри савăнтарать.

Ялти фельдшерпа акушер пунктĕнче те пĕчĕк юсав ĕçĕсем туса çурта шал енчен илемлетнĕ. Е.Г. Соколова фельдшер каланă тăрăх, кунне кунта 10-12 çын килет.

– Çавăн пекех çынсем патне килсене тухса çӳретпĕр, – тет вăл.

Юрий Александрович çавăн пекех çак кун ялти магазинта, ăнăçсăр çемьесенче пулчĕ.

Хорнуйĕнчи клуба халăх лăк! туллиех пуçтарăнчĕ. Чи малтанах район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ, капиталлă строительство, архитектура тата пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх управленийĕн ертӳçи В.Г. Никитин район аталанăвĕпе кĕскен паллаштарчĕ.

Ял тăрăхĕн пуçлăхĕ В.А. Любимова иртнĕ çул туса ирттернĕ ĕçсемпе тĕплĕн паллаштарнă май çулсем тăвас, çĕнĕ урамсене электрификацилес, шывпа тивĕçтерес, ялсене тирпей-илем кĕртес ĕçсем çинче тĕплĕн чарăнчĕ.

Районти шалти ĕçсен пайĕн пуçлăхĕн çумĕ М.М. Мясников хăйĕн сăмахĕнче Хорнуй ял тăрăхĕ районти лăпкă ял тăрăхĕсенчен пĕри пулнине палăртрĕ. Анчах преступленисем ан пулччăр тесе тăрăшмаллисем пур-ха.

Хумхантаракан ыйтусенчен пĕри вăл – ăнăçсăр çемьесен хисепĕ чакманни, хĕрарăмсем те эрех енне туртăнма пуçлани. Ку проблема асăннă ял тăрăхĕнче те çивĕч тăрать. Район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ – культура тата архив ĕçĕсен пайĕн ертӳçи А.Е. Андреева шăпах çак ыйту çинче тĕплĕн чарăнчĕ. Çавăн пекех вăл кашни ял тăрăхĕнче пĕр çĕнетнĕ база культура учрежденийĕнчен кая мар пулмаллине палăртрĕ. Ку тăрăхра вăл Тойкилтĕри Культура çурчĕ пулмалла. Ку ĕçре вырăнти халăхран та, районти яваплă çынсенчен те пулăшу самаях кирлĕ пулать пулĕ.

Чăваш Республикин Сывлăх сыхлавĕ тата социаллă аталану министерствин пирĕн районти социаллă хӳтлĕх пайĕн ертӳçи пай специалисчĕпе пĕрле тата РФ ПФ пирĕн районти управленийĕн ертӳçи Е.М. Александрова халăха хăйсен ыйтăвĕсемпе йышăнчĕç. Тĕл пулура Нина Пантелеевна ватă çынсене пырса тивекен çăмăллăхсем, Елена Михайловна пенси законодательствинчи çĕнĕлĕхсем çинчен каласа пачĕç.

Районти тĕп больницăн поликлиникин ертӳçи А.П. Чиновникова вара сывлăха сыхлас ыйтусем çинче чарăнчĕ. Аслă Çĕнтерӳ 65 çул тултарнă май вăрçă участникĕсемпе тăлăх арăмсен сывлăхне питĕ тĕплĕ тĕрĕсленине палăртрĕ. Ку ял тăрăхĕнчи асăннă категорие кĕрекенсем ку медосмотр витĕр пурте тухнă.

Район администрацийĕн экономика пайĕн пуçлăхĕ Э.И. Симакова хăйсен ĕçне йĕркелекенсене паян патшалăх пулăшу пани çинче чарăнчĕ.

Тĕл пулура вĕрентӳ учрежденийĕсенчи ĕç-хĕлпе вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕн пуçлăхĕ З.Ю. Дипломатова паллаштарчĕ.

Çĕр ыйтăвĕсемпе те ыйтусем сахал мар пулчĕç. Пурлăх тата çĕр хутшăнăвĕсен пайĕн ертӳçи А.В. Петров вĕсем çине хуравсем пачĕ.

Çак кун вăрçă ветеранĕсемшĕн тата вĕсемпе танлаштарнă категорие кĕрекенсемшĕн асра юлчĕ. Район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ, пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх управленийĕн ертӳçи В.Г. Никитин, социаллă хӳтлĕх пайĕн ертӳçи Н.П. Петрова Аслă Çĕнтерӳ 65 çул тултарнă май вĕсене юбилей медалĕсем пачĕç. Ватăсем хăйсене сума сунăшăн тав турĕç, çав йывăр çулсене аса илчĕç.

**Л. ПАВЛОВА.**

**Саламлатпăр**



Юратнă мăшăра, аттене, кукаçие – Оринин ял тăрăхне кĕрекен Патаккасси ялĕнче пурăнакан **Владислав Михайлович НАЛИМОВА** 50 çулхи юбилей ячĕпе пĕтĕм чĕреренсаламлатпăр. Сана çак паллă кун ячĕпе саламласа пурнăçра мĕн пур ыррине кăна сунатпăр. Пурнăçу ăнса пытăр, мĕн ĕмĕтленни пурнăçлантăр. Ĕçре ăнăçу, килте яланах килĕшӳ, çирĕп сывлăх сунатпăр.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, хĕрĕсемпе кĕрӳшĕсем, 2 мăнукĕ.**



Юратнă мăшăра, çепĕç чунлă аннене, ырă кăмăллă асаннене, хисеплĕ тăвана – Вăрманкасси ялĕнчи **Тамара Юрьевна АЛЕКСЕЕВАНА** 55 çул тултарнă ятпа пур кăмăлтан чи ăшă сăмахсемпе саламлатпăр. Пире, ачисене, ӳстерсе пурнăç çулĕ çине тухма пулăшнăшăн çĕре çити пуç таятпăр. Юбилей ячĕпе саламласа сана юман пек çирĕп сывлăх, сурпан пек вăрăм кун-çул, телей, ăнăçу сунатпăр. Ĕмĕтленнĕ ĕмĕтсем çитсех пыччăр, сĕтелӳ çăкăр-тăвартан ан татăлтăр, кĕрекӳ тăвансемпе пуян пултăр, ачусемпе, мăнукусемпе савăнса пурăнмалла пултăр.

**Салампа мăшăрĕ, ачисем, кинĕсем, мăнукĕсем, хăтисемпе тăхлачисем, çывăх тăванĕсем.**



Хаклăран та хаклă мăшăрăма, ытарайми аннене, кукамая, ырă чунлă, тараватлă тăванăмăра – Москакасси ялĕнче пурăнакан **Галина Владимировна КАСЕЕВАНА** 55 çулхи юбилей ячĕпе чун-чĕререн саламлатпăр. Аннене юман пек çирĕп сывлăх, вăрăм кун-çул, телей сунтпăр. Кĕрекӳ яланах тăвансемпе пуян пултăр, ачасен, мăнуксен ырлăхне курса савăнмалла пултăр. Эпир сана юрататпăр, тавах сана пуриншĕн те.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, хĕрĕпе кĕрӳшĕ, ывăлĕсем, мăнукĕсем, çывăх тăванĕсем.**



Хисеплĕ те хаклă çыннăмăра, юратнă хĕрĕме, çепĕç чунлă аннене, ырă чунлă, тараватлă тăванăмăра – Итакачкасси ялĕнче пурăнакан **Елизавета Ильинична ПАРГЕЕВАНА** 55 çулхи юбилей ячĕпе чун-чĕререн ăшшăн саламлатпăр, мĕн пур ыррине кăна сунатпăр. Пире, ачисене, ӳстерсе пурнăç çулĕ çине тухма пулăшнăшăн çĕре çити пуç таятпăр. Аннене юман пек çирĕп сывлăх, вăрăм кун-çул, телей, ăнăçу сунатпăр, кĕрекӳ яланах тăвансемпе пуян пултăр, ачусен хаваслă сассине илтсе, ырлăхне курса савăнмалла пултăрччĕ. Эпир сана юрататпăр, эсĕ пурришĕн савăнатпăр, тайма пуç сана пуриншĕн те.

**Саламлаканĕсем: юратнă ашшĕпе амăшĕ, 5 хĕрĕ, кĕрӳшĕсем, хăтисемпе тăхлачисем, çывăх тăванĕсем.**